27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ОКТЯБРЬ
20
ЭРНЕКУН
207(6702) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Генерал-полковника ПЕТРОВА

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, КАРПАТ ТĂВĔСЕН хырçи урлă каçнă та ЛУПКОВСКИ, РУССКИ, УЖОКСКИ, ВЕРЕЦКИ, ВЫШКОВСКИ, ЯБЛОНОВСКИ, ТАТАРСКИ ту каççисене тытса илсе, Чехословаки çĕрĕ çине 275 километр сарлакĕш фронтпа 20 километртан пуçласа 50 километр таран шалалла кĕрсе кайнă.

Наступлени туса пырса, фронт çарĕсем Чехословаки çĕрĕнче КЕРЕШМЭЗЕ (ЯСИНА) хулине, РАХОВ хулине тата ЧЕРТИЖНЕ, ВЕЛЬКА ПОЛЯНА, РУСКЕ, ЛЬЮТА, УЖОК, НИЖНИЙ ВЕРЕЦКИ, ЗАЛОМИСКА, ПИЛИПЕЦ, ГОЛЯТИН, ТОРУНА, НАДБОЧКО ятлă пысăк ялсене тата Çурçĕр Трансильванире СЕГЕТ хулине туртса илнĕ.

КАРПАТ ТĂВĔСЕМ урлă каçассишĕн пынă çапăçусенче ГРЕЧКО генерал-полковникăн, ЖУРАВЛЕВ генерал-лейтенантăн, ГАСТИЛОВИЧ генерал-майорăн, ГОРДЕЕВ генерал-лейтенантăн, ЛАЗЬКО генерал-майорăн, МЕЛЬНИКОВ генерал-майорăн, АФОНИН генерал-майорăн, ВЕДЕНИН генерал-майорăн, БУЖКО генерал-майорăн, ЯНКОВСКИЙ генерал-майорăн, ЛИСИНОВ генерал-майорăн, ПОДШИВАЙЛОВ генерал-майорăн, ФРОЛОВ генерал-майорăн, ПРОХОРОВ генерал-майорăн, ДУДАРЕВ генерал-майорăн, КОЛДУБОВ генерал-майорăн, УМАНСКИЙ генерал-майорăн, ФАДЕЕВ генерал-майорăн, ДРЯХЛОВ полковникăн, ВАТЛЮК полковникăн, ПАХОМОВ полковникăн, НОВОЖИЛОВ полковникăн, ЖЕРДИЕНКО полковникăн, ЧОРНЫЙ полковникăн, УГРУМЫЙ полковникăн, ВАСИЛЬЕВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн КАРИОФИЛИН, артиллери генерал-майорĕн БРИЧЕНОКĂН, артиллери генерал-майорĕн НАЙДЕНКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ТВЕРЕЦКОЙĂН, артиллери генерал-майорĕн ЖИБУРКУСĂН, ШАРАПОВ полковникăн, ЯКОВЛЕВ полковникăн, БРОЗГОЛЬ полковникăн, НИКИТИН полковникăн, ПОНОМАРЦЕВ полковникăн, ФИЛИМОНОВ подполковникăн, ЗАЙКИН подполковникăн, СИЛАЕВ подполковникăн, ГОРБАТЕНКО подполковникăн, ПИСЬМЕРОВ майорăн, КАЗАКОВ майорăн, ТЕРЕХИН подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн СОЛОВЬЕВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн РАЙКИНĂН, СЕРОВ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ЖДАНОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн НАНЕЙШВИЛИН, авиаци генерал-майорĕн ГОЛОВНЯН, авиаци генерал-майорĕн КОТЕЛЬНИКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ЛАКЕЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн ПУХОВĂН, ЕФРЕМОВ подполковникăн, СЕРИКОВ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОЛЕСНИКОВĂН, ДАВИДЕНКО полковникăн, ГОВОРОВ полковникăн, ЖУРИН полковникăн, НАУМОВ подполковникăн, БАРАШ полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн МАТВЕЕВĂН связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, КАРПАТ ТĂВĔСЕМ урлă каçассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «КАРПАТСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, октябрĕн 18-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, инçĕр çирĕм тăвата тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, КАРПАТ ТĂВĔСЕМ урлă каçнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, КАРПАТ ТĂВĔСЕМ урлă каçассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи октябрĕн 18-мĕшĕ.

У. Черчилль господина тата А. Иден господина чысласа, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче пулнă апатлану

Октябрĕн 18-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче Кремльте, Великобритани Премьер-Министрне У. Черчилль господина тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне А. Иден господина чысласа, апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура çаксем пулнă: У. Черчилль господин, А. Иден господин, Великобритани Посолĕ А. К. Керр господин, США Посолĕ В. А. Гарриман господин, Канада Посолĕ Д. Уилгресс господин, Австрали Посланникĕ Д. Малонэй господин, Çĕнĕ Зеланди Посланникĕ Ч. Босвелл господин, Британи Империйĕн Генеральнăй Штабĕн Начальникĕ А. Брук фельдмаршал, Х. Л. Исмей генерал, Британи Çар Миссийĕн Пуçлăхĕ М. Баррос генерал-лейтенант, США Çар Миссийĕн Пуçлăхĕ Д. Дин генерал-майор, Великобритани Посольствин сотрудникĕсем тата У. Черчилль господинпа, А. Иден господинпа пĕрле килнĕ çынсем пулнă. Совет Союзĕ енчен çаксем пулнă: В. М. Молотов, Маршал К. Е. Ворошилов, А. И. Микоян, Л. П. Берия, Г. М. Маленков, Л. М. Каганович, Н. А. Вознесенский, А. С. Щербаков, А. Н. Косыгин, Совет Союзĕн Великобританири Посолĕ Ф. Т. Гусев, флот адмиралĕ Н. Г. Кузнецов, А. И. Шахурин, В. А. Малышев, Б. Л. Ванников, Д. Ф. Устинов, И. Т. Тевосян, А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, С. А. Лозовский, М. М. Литвинов, И. М. Майский, авиацин Главнăй Маршалĕ А. А. Новиков, артиллерин Главнăй Маршалĕ Н. Н. Воронов, бронетанковăй çарсен Маршалĕ Я. Н. Федоренко, инженери çарĕсен Маршалĕ М. П. Воробьев, арми генералĕ А. И. Антонов, СССР Наркоминделĕпе Оборона Халăх Комиссариачĕн ответлă работникĕсем пулнă.

Апатлану питĕ туслă пулса иртнĕ, совет деятелĕсемпе хăнасем пĕр-пĕринпе хаваслăн калаçнă.

А. Иден господина чысласа, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патĕнче пулса иртнĕ ирхи апатлану

Октябрĕн 17-мĕшĕнче, Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне А. Иден господина чысласа, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патĕнче ирхи апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура çаксем пулнă: А. Иден господин, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем А. Я. Вышинский, И. М. Майский, Великобританин Совет Союзĕнчи Посолĕ А. К. Керр господин, Совет Союзĕн Великобританири Посолĕ Ф. Т. Гусев, Великобритани Посольствин Советникĕ Д. Бальфур господин, Совет Союзĕн Великобританири Посольствин Советникĕ А. А. Соболев тата СССР Наркоминделĕн 2-мĕш Европа Отделĕн заведующийĕ К. В. Новиков.

В. М. Молотов Болгари правительстви делегацийĕн членĕсене йышăнни

Октябрĕн 17-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Болгари правительстви делегацийĕн членĕсене йышăннă. Делегаци Мускава перемири тăвасси çинчен калаçма килнĕ. Йышăнура çаксем пулнă: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ П. Стайнов господин (вăл—делегаци председателĕ), портфельсĕр министр Н. Петков господин тата финанс министрĕ П. Стоянов господин. Вĕсемпе пĕрле делегаци советникĕсем те— профессор Д. Михалчев, генерал-полковник Г. Попов тата полковник И. Антонов пулнă.

Йышăнура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский пулнă.

Ялхуçалăх техникумĕсене урăхлатса йĕркелени

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ ялхуçалăх техникумĕсене урăхлатса йĕркелет. Çав вĕренÿ заведенийĕсенче халиччен тĕрлĕ йĕрке тата вĕренмелли тĕрлĕ сроксем пулнă. Малалла вĕсене пĕр пек вĕренÿ заведенийĕсем — виçĕ çул вĕренмелли техникумсем тăваççĕ. Юлашки курссенче вĕренекенсен ялхуçалăхĕнчи уйрăм отраçлĕсем тăрăх специалистсем пулма вĕренмелле пулать. Ялхуçалăх техникумĕ тăракан облаçра, крайра е автономиллĕ республикăра ялхуçалăхĕн мĕнле ĕçĕ тĕп вырăн йышăнса тăрать (йĕтĕн акса тăвасси, виноград лартса ÿстересси тата ытти те), техникумăн юлашки курсĕнче çав тĕп ĕçе вĕренмелле пулать.

Ялхуçалăх техникумĕсенчен вĕренсе тухнă çынсен виçĕ çул хушши колхозсенче, совхозсенче тата МТС-сенче ĕçлемелле. Çамрăк специалистсене çурринчен кая мар хăйсем вĕренсе тухнă техникумсем вырнаçса тăракан облаçсенче, крайсемпе республикăсенче ĕçлеме хăвараççĕ. (ТАСС).

ОКТЯБРЕН 25-МЕШЕНЧЕ УКÇАПА ЯПАЛАСЕН 4-МЕШ ЛОТЕРЕЙИН БИЛЕЧЕСЕНЕ САЛАТМА ТЫТĂНАÇÇĔ

Октябрĕн 25-мĕшĕнче укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене салатма пуçлаççĕ. Лотерея билечĕсене салатса пухнă укçа вăрçă валли, нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăхпа культура учрежденийĕсене юсаса ура çине тăратма каять.

ВЦСПС профсоюз организацийĕсене лотерейăн билечĕсене салатассишĕн ĕçлекен килхуçи арăмĕсем хушшинче сарас ĕçе вăйлăн хутшăнма хушнă, государство кредичĕпе перекет ĕçĕн комсочĕсене пулăшмашкăн профсоюз активисчĕсене уйăрса хума. Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсем тăрăх тухнă выигрышсене тĕрĕслес ĕçе йĕркелесе яма хушнă. Лотерея билечĕсене кашни хайĕн ирĕкĕпе илмелле. (ТАСС).

ЧЕХОСЛОВАКИ ÇĔРĔ ÇИНЧЕ

ÇАПАÇУРИ ÇАР, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Украинăри 4-мĕш фронтăн çарĕсем, Карпат хысакĕ урлă каçса тата тусем хушшинчи чылай çулсене тытса илсе, Чехословаки çĕрĕ çине нумай шалалла кĕрсе кайнă.

Карпат тăвĕсем хушшинчи йывăр условисенче совет çарĕсем, тăшманăн нумай вăхăт хушши çирĕплетсе пынă оборонине аркатса, хăватлăн малалла куçса пынă.

Совет çарĕсен çулне тусем кăна мар, тăшманăн укрепленийĕсем те пÿлсе тăнă. Нимĕçсем çав укреплениссене нумай уйăхсем хушши çирĕплетсе, лайăхлатса пынă. Чи кирлĕ сăртсем патне пымалли вырăнсене, тусем хушшинчи çулсене, сĕвек вырăнсене тăшман артиллерипе минометсен тата пулеметсен вут-çулăмĕпе хÿтĕлесе тăнă. «Вырăссем Карпат хысакĕ урлă нихăçан та каçаймĕç, кунта Германи алăкĕн янахĕ», — тенĕ нимĕç офицерĕсем хăйсен салтакĕсене. Нимĕç генералĕсем хăйсен çарĕсене пĕр утăм та каялла чакмалла мар тесе нумай хутчен приказсем панă.

Гитлеровецсем тусем урлă каçмалли çулсене уйрăмах çине тăрса тĕреклетнĕ. Вĕсене тÿрех фронтран пырса тытса илме май пулман. Таврари тусем çинчен нимĕçсем çав çулсем патне пымалли вырăнсене вăйлă вут-çулăмпа витсе тăнă. Пирĕн подразделенисем, сĕвекрех тусем тăрăх тата ту хушăкĕсемпе тăшман оборонин флангĕсем патнелле шăвăна-шăвăна пырса, нимĕçсем çине тылран тапăннă. Çав вăхăтра ытти подразделенисем тăшмана фронтран атакăланă, тусем урлă каçмалли çулсене тыта-тыта илнĕ.

Карпат хысакĕ урлă каçса, совет çарĕсем чăнкă тусен сĕвекĕсем тăрăх хĕвеланăçнелле аннă та, çапла вара тусен леш енчи анлă вырăна тухнă.

Умра Керешмэзе (Ясина) хули сарăлса выртнă.

Çав хула пин метр çÿллĕшлĕ анлă сăртлăх çинче вырнаçса ларать. Нимĕçсем ăна тусем хушшинчи чăн-чăн крепость туса хунă. Çав хула таврашĕнчи çÿллĕ вырăнсене пурне те вăйлăн çирĕплетнĕ. Керешмэзе хули патнелле пыракан мĕнпур çулсемпе сукмаксене нимĕçсем чулсемпе пысăк йывăççем пăрахса пÿлсе лартнă. Тăшман персе тăнине пăхмасăрах, пирĕн саперсем çав чăрмавсем урлă çулсем уçнă, пехотинецсем вара ку вăхăтра тăшманăн укреплениййĕсене аякран кайса çавăра-çавăра илнĕ.

Кĕрешÿ вăхăтра совет артиллерийĕ хутшăннă. Батарейăсем тăвăллăн пеме пуçланă. Артиллерирен персе хатĕрленнĕ хыççăн атакăна пехота подразделенийĕсем кĕрсе кайнă. Тăшманăн боевой йĕркисене çĕмĕре-çĕмĕре кĕрсе, пирĕн подразделенисем оборонăра тăракан тăшмана уйрăм ушкăнсене пайласа уйăрнă, вĕсене пĕчченшерĕн пĕтере-пĕтере тăкнă. Çакна пула тăшман хулара та тытăнса тăма пултарайман. Урамри çапăçусенче нимĕçсене часах çапса аркатнă. Çапла вара тăшманăн хăватлăн тĕреклетнĕ тата тепĕр районĕ арканса кайнă.

Словаксемпе русинсем, чехсем пирĕн воинсене, хăйсен тăванĕсене, хăйсене ирĕке кăларса хăтаракансене кĕтсе илнĕ пек, çав тери хаваслăн кĕтсе илеççĕ. Пуриншĕн те пĕр тăшман пулса тăракан нимĕçе çапса аркатма вĕсем совет подразделенийĕсене пĕтĕм вăйпа пулăшаççĕ. Пĕр хуторшăн çапăçнă чухне пирĕн боецсем чех хресченĕ пĕр пÿртрен чупса тухнине курнă. Вăл вилнĕ нимĕç аллинчен винтовка тытса илнĕ те: «Пире ирĕке кăларакансем килчĕç!», тесе кăшкăрса, красноармеецсемпе пĕрле нимĕçсене хăвалама пуçланă. Çав çапăçура Чехословаки патриочĕ икĕ нимĕç автоматчикне пĕтерсе тăкнă.

Нимĕçсене пĕр чех ялĕнчен штурмласа хăваласа кăларнă подразделенири боецсем çав ялта пĕр çынна та тĕл пулман. Ялăн хĕвеланăç хĕрринче кăна пирĕн автоматчик улăм купи айне пытаннă ватă хресчене тупнă. Ватă çын, хăй умĕнче красноармеец тăнине ăнланса илсен, хаваслăн кăшкăрса вăрман патнелле чупнă.

— Çынсем, хамăра ирĕке кăларакансене кĕтсе илме тухăр!—тенĕ вăл.

Часах вăрмантан мĕнпур ял çыннисем таврăннă. Вĕсем пирĕн боецсене хăйсен килĕсене чĕннĕ, мĕнпе май килнĕ, унпа хăналанă, Совет Союзĕ çинчен, Хĕрлĕ Çар çинчен ыйтса пĕлнĕ.

Н. МАРКОВСКИЙ.

ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Октябрĕн 22-мĕшĕнче государствăна тырă парас ĕçе вĕçлемелли массăллă воскресник пулать

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ кăçалхи октябрĕн 22-мĕшĕнче государствăна тырă леççе парас ĕçе вĕçлес тĕлĕшпе массăллă воскресник ирттерме йышăннă. Çак кун республикăри мĕнпур колхозсемпе совхозсен тата подсобнăй хуçалăхсен, тырă паракан уйрăм çынсен пур обязательствăсем тăрăх та государствăна тырă парса татмалла, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă тырра пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне леççе памалла.

ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен, çавăн пекех тата колхоз председателĕсен, совхозсемпе подсобнăй хуçалăх директорĕсен, партипе комсомолăн пуçламĕш организацисен, воскресникe тĕплĕн хатĕрлене, авăн çапас ĕçĕн хăвăртлăхне ÿстермелле, транспортнăй бригадăсене тырă турттарас ĕçе вĕçлеме кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ тата туртăм вăйĕ парса вăйлатмалла.

Воскресникe хатĕрленнĕ май, государствăна тырă леççе парас хăвăртлăха пур майсемпе те ÿстермелле, çапла вара воскресник кунĕ тĕлне хатĕрлев пункчĕсене ытларах тырă турттарса памалла, октябрĕн 22-мĕшĕнче—массăллă воскресник кунĕнче—государствăна тырă турттарса парас ĕçе вĕçлеме условисем туса хатĕрлемелле.

Октябрĕн 22-мĕшĕнче пур çĕрте те государствăна тырă леççе пама хĕрлĕ обозсем организацилемелле. Хатĕрлев пункчĕсен вĕсем патне илсе пынă тырра пĕр чăрмавсăр, хăвăрт йышăнма хатĕрленмелле, вĕсен ĕçĕнче йĕркесĕрлĕхсем пулмалла мар.

Парти организацисен задачи—массăллă-политикăллă ĕçе сарса ярса, колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăхĕнчи тата хатĕрлев системинчи мĕнпур работниксене государствăна срокчен тырă парса татни хальхи лару-тăрура вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнлантарса парасси пулать.

Государствăна тырă парас ĕçе ăнăçлăн вĕçлесе тата планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă парса, хамăр Тăван çĕршывăн вăрçă тĕлĕшĕнчи вăй-хăватне тĕреклетер, ылханлă фашистла нимĕç захватчикĕсене таткăланах çĕнтерес сехете çывхартар!

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 18-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре малалла тапăнса пынă, ЛИЕЛУПЕ шывĕ урлă каçнă та ПИКСЫНЕКЛ, ТЕМЕРИ, ВРАНЬТЮЦИЭМС, КАЙГУЦИЭМС, ВАГЛУНТЭСЦИЭМС, ГАЙЛИШИ, НЕЙЖЕМУИЖА, ВЕЙГАЙНИ ялĕсене тата ТЕМЕРИ, ЛИВБЕРЗЕ, БУДАС чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, КАРПАТ ТĂВĔСЕН ХЫРÇИ урлă каçнă та, ЛУПКОВСКИ, РУССКИ, УЖОКСКИ, ВЕРЕЦКИ, ВЫШКОВСКИ, ЯБЛОНОВСКИ, ТАТАРСКИ ту каççисене туртса илсе, Чехословаки çĕрне 275 километр сарлакĕш фронтпа 20 километртан пуçласа 50 километр таран шалалла кĕрсе кайнă. Наступлени туса пырса, фронт çарĕсем Чехословаки çĕрĕнче КЕРЕШМЕЗЕ (ЯСИНА) хулине, РАХОВ хулине тата ЧЕРТИЖНЕ, ВЕЛЬКА ПОЛЯНА, РУСКЕ, ЛЬЮТА, УЖОК, НИЖНИЙ ВЕРЕЦКИ, ЗАЛОМИСКА, ПИЛИПЕЦ, ГОЛЯТИН, ТОРУНА, НАДБОЧКО ятлă пысăк ялсене тата Çурçĕр Трансильванире СЕГЕТ хулине туртса илнĕ.

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, ВАЛИА-ЛУЙ-МИХАЙ хулипе чугун çул узелне, СИМЛЕУЛ-СИЛЬВАНИЕЙ хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ОКНА-ШУГАТАГ, БУДЕШТИ, КРЭЧЕШТИ, ДУМБРАВИЦА, ХИТЯГА, БЕРЗЭУЛ-ДЕ-СУС, УРМЕНИШ, МИРЕШУЛ-МАРЕ, ОДОХРЕЙ-СОМЕШ, СЭЛЭТИГ, КИЛИСАРА, БОКША, НУШФАЛЭУ, ГАЛОС-ПЕТРЕ, ШИМИАН ятлă пысăк ялсем тата ОКНА-ШУГАТАГ, ХИТЯГА, МЕРЕШУЛ-МАРЕ, БЕНЕСАТ, СИЛИНДРУ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Пирĕн çарсем, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, БЕЛГРАД хулине тăшмантан тасатассишĕн çапăçнă. БЕЛГРАД хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем нимĕç чаçĕсен самаях пысăк ушкăнне çавăрса илнĕ те вĕсене пĕтерсе тăкассишĕн ăнăçлă çапăçнă.

БОЛГАРИ çарĕсем, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе тата пирĕн çарсемпе пĕрле нимĕçсене хирĕç кĕрешсе, БЛАЦЕ, КУРШУМЛЕ ятлă пысăк ялсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 17-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 58 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 60 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРЕН АВИАЦИ ХЕВЕЛТУХĂÇ ПРУССИРИ ГОЛЬДАП ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ТАПАННИ

Октябрĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Хĕвелтухăç Пруссири Гольдап чугун çул узелне тапăннă.

Тапăну вăхăтĕнче чугун çул узелĕнче нимĕçсен çар эшелонĕсем нумай пулнă. Бомбăсем пăрахнине пула, пушарсем тухнă, уйрăмах вăйлă пушарсем чугун çул узелĕн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче пулнă. Вагонсем, платформăсем тата горючи цистернисем çуннă. Чугун çул узелĕн çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче питĕ вăйлă взрыв пулнă.

☆ ☆ ☆

Иелгава (Митава) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, çапăçса Рига заливĕ хĕррипе малалла куçса пынă. Тăшман хытă хирĕç тăрать, анчах та совет чаçĕсем пыра-пыра çапнипе хăйĕн позицийĕсене пĕрин хыççăн теприне çухатса пырать. Хытă çапăçнă хыççăн нимĕçсене çулсен паха узелĕ пулса тăракан Темери местечкинчен хăваласа кăларнă. Пирĕн ытти чаçсем Лиелупе шывĕ урлă каçнă. Нимĕçсем темиçе хутчен те хаяр контратака тунă. Совет боецĕсем, çав тери хăвăрт пыра-пыра çапса, нимĕçсене каялла ывăтса янă та Лиелупе шывĕн сулахай хĕрринче темиçе ял туртса илнĕ. Тăшманăн 800 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 4 танк, 16 хир тупписи тата инженери пурлăхĕн складне тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, Карпат тăвĕсем урлă каçнă та Чехословаки çĕрĕ çине кĕрсе кайнă. Яблоновски ту каççи районĕнче тăшман, малтанах нумай вăхăтлăха туса хунă укреплениссемпе усă курса, хытă хирĕç тăнă. Тусем айккинче нимĕçсем персе тăмалли хатĕрсем нумай туса хунă. Упти пур çулсем çинче те тата ту хушăкĕсенче те минăсем лартса тултарнă, çулсене пÿлепÿле лартнă. Пирĕн штурмлакан отрядсем, саперсемпе пĕрле кĕрешсе, тăшман оборони умĕнчи чăрмавсем урлă каçнă. Вара кун хыççăн çапăçăва пирĕн тĕп вăйсем кĕрсе кайнă. Совет чаçĕсем, фронтран тата флангсенчен хăватлăн пыра-пыра çапса, тăшман оборонине татнă. Чехословаксен Керешмэзе (Ясина) хулипе чугун çул станцине штурмласа тытса илнĕ. Кăнтăр-хĕвеланăçнелле наступлени туса пырса, пирĕн çарсем тăшманăн халь çеç пырса çитнĕ горно-стрелковăй чаçĕсене хирĕç пулнă. Нимĕçсен Тисса шывĕ улăхне кĕме чаракан питĕ вăйлă оборона узелĕсем пулнă, вĕсем çавсемпе усă курса çапăçнă. Пирĕн чаçсем çав узелсене аякран кайса çавăрса илнĕ. Çавăн чухне пирĕн чаçсем Сведовец ту хырçи урлă каçнă. Ближнице тăвĕнчен аякран иртсе кайнă та Тисса шывĕ хĕррине тухнă. Çапла совет чаçĕсем, нимĕçсен тĕреклетнĕ пункчĕсене аякран кайса çавăрса илсе, вĕсен тылне тухса, çав тери хăвăрт пырса çапнă та Чехословакин Рахов хулине туртса илнĕ. Юлашки виçĕ кун хушшинче темиçе пин гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пĕр районра кăна нимĕçсенчен 34 тупă, 200 пулемет ытла, боеприпассен тата тĕрлĕрен çар пурлăхĕн 9 складне тытса илнĕ. 500 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ. Чехословаки халăхĕ пирĕн çарсене питĕ хĕпĕртесе тата питĕ ăшшăн йышăнать. Упти çынсем Хĕрлĕ Çар килессе тем пекех кĕтни çинчен каласа кăтартаççĕ. Пирĕн иртсе пыракан боецсене хресченсем витри-витрипе сĕт, панулмисем тата эрех илсе тухса параççĕ. Ялти халăх та, хулари халăх та хăйсене Хĕрлĕ Çар боецĕсем фашистла нимĕç чуралăхĕнчен ирĕке кăларнине нихăçан та манас çук, теççĕ. Хĕрлĕ Çар пире савăнăçпа телей тавăрса пачĕ, теççĕ вĕсем.

* * *

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле çапăçса, малалла куçса пынă. Байа-Маре хулинчен 8 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Думбравица ялне туртса илнĕ. Пирĕн Сомшула шывĕпе Лэпушула шывĕ хушшинче кĕрешекен пĕр соединени чаçĕсем тăшмана хăюллăн пырса çапнă та каялла хăваласа янă. Пирĕн ытти чаçсем Симлеул-Сильвания хулине штурмласа туртса илнĕ. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсемпе венгерсем çулсем çинче хĕçпăшал тата вăрçă хатĕрĕсем нумай пăрахапăраха хăвараççĕ. Тĕрлĕ участоксенче кун каçиччен нимĕçсемпе венгерсен 1.500 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Пирĕн çарсемпе Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем çаплах Белград урамĕсенче çапăçнă. Тăшмана хулан пысăк пайĕнчен хĕссе кăларнă, анчах вăл хăшпĕр районсенче çирĕпленсе ларнă та питĕ хытă хирĕç тăрать. Совет боецĕсемпе Югослави боецĕсен отрячĕсем, танкистсемпе артиллеристсем пулăшнипе, тăшман хирĕç тăракан вырăнсене пусараççĕ, Югослави столицине фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тасатаççĕ. Белград хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем нимĕç çарĕсен самаях пысăк ушкăнне çавăрса илнĕ. Совет чаçĕсем тăшманăн çав чаçĕсене Дунай шывĕ хĕррине хĕстерсе лартнă та вĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 2.000 вилли таран выртса юлнă. 5 чугун çул эшелонĕ, 6 склад тата 300 автомашинăна çити тытса илнĕ. 1100 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Пирĕн летчиксем тăшманăн Нови-Сад хули районĕнчи аэродромне ăнăçлăн тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула, аэродромра нимĕçсен 10 самолечĕ тата 3 ангар çунса кайнă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсемпе авиацийĕ Виндава портĕнче нимĕçсен танкерне тата пĕтĕмĕшпе 18.000 тонна таякан 2 транспортне шыва путарнă.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Малти вырăна тухассишĕн

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри Князев юлташ начальник пулса ĕçлекен цех коллективĕ, октябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче сентябрьти итогсене сÿтсе-явса, продукци туса кăларассине ÿстермелли майсене палăртрĕ. Уяв умĕнхи ăмăртăва анлăн сарса пыни ĕç тухăçлăхне чылаях ÿстерме пулăшрĕ. Халĕ цех кулленхи плана пĕрмаях тултарса пырать.

Цехри нумай рабочисем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Электросварщица Капранова Егорова токаре ăмăртăва чĕннĕ чухне нормăна 300 процент тултарма сăмах панă. Халĕ вăл 4 норма тăвать. Егорова юлташ. икĕ станокпа ĕçлесе, 6 норма таран тултарать. Токарьсем Николаева, Буткина, Шаповалова, электросварщица Зиновьева, сверловщицăсем Филипповăпа Пономаренко юлташсем те кулленех 3 нормăран кая мар тултараççĕ.

А. ДЕМЬЯНКОВ.

Ăмăрту итогĕсене профсоюз комитечĕн пленумĕнче сÿтсе-яваççĕ

ВЦСПС-ăн XII-мĕш пленумĕ йышăннă тăрăх, ăмăрту итогĕсене профсоюзăн заводри комитечĕн сÿтсе-явмалла. Çак йĕркене пăхăнса, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри профсоюз комитечĕ октябрь уйăхĕнче ăмăрту итогĕсене хăйĕн пленумĕнче сÿтсе-явнă. Заводри куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавсене Буйволов юлташ начальник пулса ĕçлекен тата Крочек юлташ начальник пулса ĕçлекен цехсене панă. Конструкторски отдел заводри лайăх отделсене пама тунă Хĕрлĕ Ялава илме тивĕçлĕ пулнă.

Ăмăртура мала тухнă мастерсене Гвоздев, Никитин, Жигунов, Короткий. Холык юлташсене заводри чи лайăх мастерсен ятне, Алексеева, Лобышева, Черепанова, Дергачова, Терентьев юлташсене заводри чи лайăх установщиксен ятне панă.

Комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем хушшинчи ăмăртура мала тухнă Федорова юлташ бригадине куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялав панă.

Пĕр пек профессипе ĕçлекенсен ăмăртăвĕнче мала тухнă нумай рабочисене заводри чи лайăх токарь, штамповщица тата ытти профессипе ĕçлекенсен ятне панă.

Сменăра 15 норма

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинатри цех коллективĕсен ăмăртăвĕнче сентябрь уйăхĕнчи итогсем тăрăх Болотов юлташ начальник пулса ĕçлекен цех мала тухнă. Вăл цех коллективне заводри куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялав панă.

Уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăннă рабочисем октябрь уйăхĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ. Новохатный юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри токарь И. Ломтев юлташ иртнĕ уйăхри плана 500 процент тултарнă пулсан, октябрĕн малтанхи вунăкунлăхĕнче нормăна кулленех 630 процент тултарса пынă. Иккĕмĕш вунăкунлăхра вара вăл хăйĕн ĕçне татах лайăхлатнă, куллен 10 норма тултарса ĕçлеме тытăннă. Октябрĕн 15-мĕшĕнче Ломтев юлташ нормăна 1.072 процент тултарнă. Çакăн хыççăн тепĕр икĕ кунтан çав цехри токарь В. Щеглов юлташ нормăна 1500 процент тултарса Ломтев юлташран иртсе кайнă. Çак çитĕнÿсене вĕсем деталь тăвас ĕçе лайăхлатнипе тунă.

А. КАРТАШОВА.

Колхозсен Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвĕ

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕНЧЕ АВĂН ÇАПАС ĔÇ ОКТЯБРĔН 15-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă	Вăрлăхăх акнă курăксене çапса шĕкĕлчени
Чурачăк	96,3	61,3
Элĕк	95,6	71,2
Муркаш	90,0	53,2
Шăмăршă	89,7	61,9
Шупашкар	89,2	74,7
Йĕпреç	89,0	—
Шăхасан	88,5	—
Çĕрпӳ	87,0	81,4
Сĕнтĕр	86,3	81,4
Ишлей	86,1	37,9
Вăрмар	85,2	33,5
Пăрачкав	83,7	—
Çĕмĕрле	83,5	21,8
Вăрнар	83,1	30,2
Калинино	82,7	22,9
Елчĕк	82,3	59,6
Канаш	81,7	18,4
Куславкка	81,4	46,3
Красноармейски	81,1	72,7
Хĕрлĕ Чутай	80,1	32,5
Чкаловски	79,1	27,7
Первомайски	77,8	10,1
Сĕнтĕрвăрри	76,3	78,0
Советски	76,1	16,7
Кувакино	75,8	—
Октябрьски	74,7	39,9
Етĕрне	73,3	17,9
Улатăр	72,3	26,0
Тăвай	70,9	20,2
Комсомольски	69,2	19,5
Шупашкар хули	93,5	—
Пĕтĕмпе	82,5	37,9

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕМ КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТУМАЛЛИ ПЛАНА ОКТЯБРĔН 15-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(Процентпа)

Районсем	Плана тултарнă
Вăрнар	95,3
Элĕк	91,0
Шупашкар	90,4
Чурачăк	86,7
Муркаш	86,3
Октябрьски	83,7
Сĕнтĕрвăрри	81,1
Çĕрпӳ	79,6
Куславкка	79,5
Красноармейски	76,4
Вăрмар	[illegible]
Ишлей	[illegible]
Елчĕк	[illegible]
Сĕнтĕр	[illegible]
Етĕрне	[illegible]
Шăхасан	[illegible]
Канаш	[illegible]
Калинино	[illegible]
Советски	[illegible]
Хĕрлĕ Чутай	[illegible]
Комсомольски	[illegible]
Шăмăршă	[illegible]
Йĕпреç	[illegible]
Первомайски	[illegible]
Чкаловски	[illegible]
Çĕмĕрле	[illegible]
Тăвай	[illegible]
Улатăр	[illegible]
Пăрачкав	[illegible]
Кувакино	9,4
Шупашкар хули	100,0
Пĕтĕмпе	58,3

Хĕрлĕ Çар фондне—тырă

ШАХАСАН, октябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницăсем Украина колхозникĕсем чĕнсе каланине хапăл туса йышăнчĕç, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 26,000 пăт тырă пама пулчĕç. Ĕнерхи кун тĕлне, хатĕрлев пункчĕсенчен пĕлтернĕ тăрăх, пирĕн районри колхозсем 15000 пăт ытла леçсе панă.

«Победа» колхоз Хĕрлĕ Çар фондне 4.000 пăт пама йышăннă, 2.000 пăтне леçсе панă, Киров ячĕпе тăракан колхоз 2.000 пăт пама пулнă, паянхи куна 1000 пăт ытла леçсе панă. Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз 1000 пăт, Калинин ячĕпе тăракан колхоз 2000 пăт, «Красный Октябрь» колхоз 1000 пăт, «Гвардеец» колхоз 700 пăт пама йышăннă. Асăннă колхозсем паян-ыран çав тырра пĕтĕмпех парса пĕтерессĕ. «Ударник» колхоз, Хĕрлĕ Çар фондне 800 пăт тырă парса, хăйĕн сăмахне пурнăçларĕ.

Октябрĕн 20-мĕшĕнче районри мĕнпур колхозсем хăйсем Хĕрлĕ Çар фондне пама пулнă тырра парса татассĕ.

П. ПЕТРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура илнĕ обязательствăсене нумай колхозсем срокра пурнăçласа пырассĕ. Уйрăмăнах Хĕрлĕ Çар фондне тырă парасси пысăк çĕкленӳпе пулса пырать. Çав фонда «Партизан» колхоз 750 пăт, «Правда» колхоз 650 пăт, «12 лет Октября»—924 пăт, Калинин ячĕпе тăракан колхоз 350 пăт, «Красный пахарь» колхоз 250 пăт, «Первое мая» колхоз 250 пăт, «Красная звезда» колхоз 250 пăт, Ильич ячĕпе тăракан колхоз 300 пăт, «Янмурзино» колхоз 900 пăт Хĕрлĕ Çар фондне тырă парса, хăйсем илнĕ обязательствăна пурнăçларĕç. Çак хисеплĕ те пархатарлă ĕçе районри ытти колхозсем те паян-ыранах пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлессĕ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ, октябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Украина колхозникĕсем чĕнсе каланине ответлесе тата Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне паянхи кун тĕлне 12.250 пăт тырă пачĕç. Хĕрлĕ Çар фондне «Звезда» колхоз 323 пăт, «Социализм» колхоз 275 пăт, «Коминтерн» колхоз 202 пăт, Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз 250 пăт, «Заря» колхоз 189 пăт, «Çутталла» колхоз 165 пăт, «Путь коммунизма» колхоз 360 пăт, «Анис» колхоз 409 пăт, «Комбайн» колхоз 275 пăт, Буденный ячĕпе тăракан колхоз 398 пăт, Тельман ячĕпе тăракан колхоз 350 пăт тырă панă. Вĕсем хăйсем илнĕ обязательствăна срокчен пурнăçларĕç.

Анчах та районра çак тĕлĕшпе начар ĕçлекен колхозсем те пур-ха. Акă Щамалти «Марти» колхоз 192 пăт леçес вырăнне 54 пăт, Маяковский ячĕпе тăракан колхоз 198 пăт вырăнне 60 пăт, Винокуров ячĕпе тăракан колхоз 234 пăт вырăнне 120 пăт кăна леçнĕ. Вĕсем пĕтĕм района малти вырăна тухма чăрмантарса тăрассĕ. Халĕ, çанталăк лайăх тăнă чухне, çак ĕçе вăхăтра пурнăçлассишĕн кашни колхозăн çине тăрса ĕçлемелле.

И. ЧИРКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Сăмах патăн—ăна ĕçе кĕрт

ЧУРАЧĂК, октябрĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне пирĕн колхозсем 26.000 пăт тырă пама йышăнчĕç тата çак тырра октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне хатĕрлев пунктне леçсе пама пулчĕç. Обязательство илтĕн пулсан, ăна чыслăн пурнăçла. Пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн кăнтăрла та çĕрле те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлессĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, паянхи кун тĕлне Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама пулса илнĕ обязательствăна эпир 85 процент пурнăçланă.

Шуржкасси ялсоветне 5 колхоз кĕрет. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 600 пăт, Сталин ячĕпе тăракан колхоз 350 пăт, «Первое мая» колхоз 240 пăт, «Большевик» колхоз 350 пăт, «Борец» колхоз 240 пăт Хĕрлĕ Çар фондне тырă парса, илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçларĕç. Çавăн пекех «Прожектор», «Красное Сормово» колхозсем те кашниех 600-шер пăт тырă Хĕрлĕ Çар фондне пачĕç.

Районра авăн çапасси те ăнăçлă пырать, паянхи кун тĕлне 37 колхоз авăн çапса пĕтерчĕç. Кĕрхи çĕртме тумалли плана районĕпе 92 процент тултартăмăр.

И. СКВОРЦОВ,
Райисполком председателĕ.

Илнĕ обязательствăна срокра пурнăçламалла

ÇĔРПӲ. Украинăри колхозниксем, çавăн пекех тата Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсем чĕнсе каланисене колхозниксем хушшинче тĕплĕн ăнлантарса панă хыççăн районра авăн çапас, Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тырă парас ĕç [illegible]

Авăн çапнипе пĕрлех нумай колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне памалли тырра хатĕрлев пункчĕсене срокра леçсе парассĕ. Паянхи кун тĕлне «Богатырь» 840 пăт панă, «Ĕмĕт», «Дружба», «Новая жизнь» колхозсем [illegible]

[illegible]

Колхозниксен парни

СОВЕТСКОЕ. [illegible]

Я. ВАСИЛЬЕВ.

Кĕрхи çĕртмене çак кунсенчех туса пĕтермелле

СЕНТЕРВАРРИ. [illegible]

Агроном В. СПИРИДОНОВ.

Ишлей районĕнче выльăхсене хĕл каçарма кирлĕ пек хатĕрленмессĕ

Хĕл çывхарать. Выльăх-чĕрлĕхе витесенче тытса усрамалли тапхăр пуçланать. Выльăхсене ăнăçлă хĕл каçарасси вĕсен апачĕпе çуртйĕрĕсене мĕнле хатĕрленинчен килет.

Мĕнле хатĕрленессĕ-ха выльăхсене хĕл каçарма Ишлей районĕнче?

Район, пĕтĕмĕшпе илсен, выльăхсене тăрантарса усрама апат çителĕклĕ пухса хунă темелле. (Апат хатĕрлес ĕç, паллах, халĕ те пырать). Малтанласа шута илнĕ тăрăх, пĕрлештернĕ выльăхсем валли 72.500 центнер утă пухса хунă. Хальхи вăхăтра колхозсем авăн çапнă май ыраш, сĕлĕ улăмĕсем, пучах, арпа хатĕрлессĕ. Тирпейлĕ тыткаласан, улăм-тавраш пур колхозсен те çитмелле. Район çулçăллă апат тата вĕлтрен хатĕрлемелли плана тултарнă.

Анчах районăн ку енĕпе туса çитермен ĕçсем пур-ха. Силос хывма хушса панă плана тултарман, плана тултарас пулсан, татах 900 тонна силос хывмалла. Силос хывмалли плана пурĕ 27 колхоз пурнăçа кĕртмен. Уйрăмах «Ишлей», «Депутат», «Родина», Ильич тата Войков ячĕсемпе тăракан колхозсенче çак ĕç япăх пырать. Вăл колхозсем силоса 10—12-шер тонна кăна хывнă.

Выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçре выльăх витисене юсани, çĕнĕрен туни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ĕç вара Ишлей районĕнче начар пулса пырать. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçармăшăн çуртйĕр хатĕрлесе хурасси çинчен» постановлени йышăннăранпа виçĕ уйăх ытла иртрĕ. Чылай колхозсенче çак ĕçе кая хăварса пынă: тырпула пухса кĕртетпĕр, вара витесене юсама тытăнатпăр, тенĕ. Район руководителĕсем, çавăн пек сиенлĕ шухăш-кăмăла сивлес вырăнне, унпа килĕшсе пурăннă, Совнаркомпа Обкомăн решенине колхозсем мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслесе тăман.

Райçĕрĕç пайĕнчи даннăйсем тăрăх, районĕпе 45 лаша вити, 22 ĕне вити, 40 сысна вити, 31 сурăх вити юсамалла. Ку шута çĕнĕрех витесене, юсамасăр е ăшă тытмалла тумасăр вĕсенче выльăх усрама çук пулни те, кĕртмен. Ун пек витесене райçĕрĕç пайĕ юрăхлă тесе шутланă. Çапла вара, юсамалли витесен хисепĕ райçĕрĕç пайĕ кăтартнинчен ытларах пулать. Анчах вăл шутран мисе вите юсани, ăшă тытмалла туни паллă мар, çĕнĕрен туни те курăнмасть. Уйрăмах витесене çĕнĕрен тăвас ĕç сӳрĕк пырать. Колхозсенче темиçе çул маларах тума тытăннă витесем çаплипех ларассĕ. Сăмахран, ку районри «1-ое августа» колхозра иртнĕ çулсенче икĕ вите тума тытăннă. Вĕсене туса пĕтермесĕрех пăрахнă. Колхозри строительство бригади саланса кайнă, унăн членĕсем урăх ĕçсенче ĕçлессĕ.

«Красное знамя», «Активист», «Партизан» тата ытти колхозсенче те выльăхсене хупмалли çуртйĕрсем хĕле хатĕр мар. Выльăх витисене хĕле хатĕрлес ĕçе кая хăварса пырса, çав колхоз руководителĕсем кăçал та иртнĕ çулхи йăнăшах тăвассĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе Ишлей районĕ иртнĕ çулсенче малта пыратчĕ, халĕ юлса пыма пуçларĕ. Выльăхсен йышне ӳстермелли çак çулхи плана район сурăхсемпе ĕнесем енĕпе тултарнă, анчах ирĕке кăларнă районсене сутнă ĕнесене тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе аш-какай панă хисепе шутламасан, план ĕнесем енĕпе тулмасть. Районра уйрăмах сыснасемпе качака-кĕсĕк хисепĕ сахал ӳснĕ: плана тултарас пулсан татах 865 пуç сысна, 5 пин пуçа яхăн качака-кĕсĕк кирлĕ. Лашасем ĕрчетмелли плана та район 81,5 процент çеç тултарнă.

Районăн пĕрлештернĕ выльăхсене государство планĕпе пăхнă хисепе çитерес тесен, вĕсене контрактацилес ĕçе анлăн сарса ярас пулать. Халĕ районра çак ĕç çителĕклĕ пырать теме çук-ха. Райçĕрĕç пайĕнчи даннăйсем тăрăх, сыснасене, сăмахран, пĕтĕмпе те 53 пуç çеç контрактациленĕ. Выльăх-чĕрлĕх йышĕ уйрăмах «Депутат», «Искра», «Победа» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсенче сахал ӳснĕ. «Искра» колхозра планпа 15 сысна кирлĕ, хальхи вăхăтра унта пĕр пуç анчах. Ишлей ялсоветĕнчи колхозсенче те выльăхсем хисепĕ планпа пăхнинчен чылай сахалтарах. Çакă вăл иртнĕ çулта выльăхсене япăх хĕл каçарнинчен, кăçал çуркунне апат çитменнинчен килнĕ.

ВКП(б) Ишлей райкомĕпе райсовет исполкомĕн, районри зоотехниксемпе ветработниксен малашне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ытларах та тимлĕнрех ĕçлемелле. Колхозсенче выльăхсене контрактацилес ĕçе анлăн сарса ярса, 1945 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултармалла, пĕрлештернĕ выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленсе çитмелле.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

Финляндипе перемири çинчен тунă килĕшĕве пурнăçа кĕртни пирки

ХЕЛЬСИНКИ, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндипе перемири çинчен килĕшӳ тунăранпа, урăхла каласан, кăçалхи сентябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа, Финлянди правительстви çав килĕшӳрен тухса тăракан хăйĕн чылай обязательствисене пурнăçа кĕртрĕ.

Финлянди Совет Союзне тара панă Порккала—Удд районне килĕшӳре палăртнă сроксенче тасатса çитерчĕ. Тара илнĕ районăн чиккисене палăртас тĕлĕшпе ĕçлеме тунă Совет Союзĕпе Финляндин пĕрлешӳллĕ комиссийĕ октябрĕн 7-мĕшĕнче ĕçе тытăннă та октябрĕн 13-мĕшĕнчен вара çав чикĕсене хирте палăртма пуçланă. Финляндин кăнтăрти тата кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи çыранĕсенче совет авиацин базисене тума унти аэродромсене, вĕсенчи мĕнпур оборудованипе пĕрле, Союзлă (Совет) Главнокомандованин аллине панă.

Килĕшӳ тăрăх, Финлянди сентябрĕн 20-мĕшĕнче Венгрипе, Словакипе, Хорватипе дипломатиллĕ тата ытти тĕрлĕ çыхăнусем тытма пăрахнă, çавăн пекех тата ют çĕршывсен Финляндире тăракан миссийĕсемпе консульствисене те тулашри тĕнчепе кирек мĕнле çыхăну тытма та пăрахтарнă.

Советăн тыткăна лекнĕ çыннисене, Финляндире тытса чарнă çынсене тата Финляндие ирĕксĕрлесе илсе кайнă совет гражданĕсене финсен влаçĕсем ирĕке кăларнă. Çав граждансене Совет Союзне тавармалли плана туса, ăна Союзниксен Контроль Комиссийĕ аллине панă. Тыткăнран ирĕке кăларнă çар çыннисен малтанхи ушкăнĕсем Совет Союзĕпе Финлянди чикки патне пыма тытăннă.

Перемири çинчен тунă килĕшĕве пурнăçа кĕртес майпа, Финлянди сеймĕ сентябрĕн 23-мĕшĕнче Финлянди территорийĕ çинчи гитлерла (фашистла) организацисене салатса яма Финлянди правительствине право паракан закона çирĕплетнĕ. Ку закон тăрăх, Финлянди правительстви çав йышши 400 организацие яхăн салатса ярасси çинчен пĕлтернĕ. Уйрăмăн илсен, ИКЛ ятлă фашистла организацие салатса янă. Унăн «Аян Суунта» ятлă хаçачĕ октябрĕн 4-мĕшĕччен тухса тăнă, анчах Союзниксен Контроль Комиссийĕ хушнипе çав хаçата октябрĕн 5-мĕшĕнче хупса лартнă. Финсен влаçĕсем политикăллă ĕçсемшĕн тĕрмене хупса лартнă 1.035 çынна, вăл шутра 195 совет гражданне, ирĕке кăларнă. Анчах çав совет гражданĕсене формальнăй йĕркепе тĕрме режимĕнчен хăтарнă пулин те, финсен влаçĕсем вĕсене юлашки кунчченех тĕрмере тытса усранă. Германипе Венгрин Финляндири çар пурлăхне, трофей вырăнне хурса, Союзлă (Совет) Главнокомандованин аллине парасси çинчен калакан статьяна Финлянди пурнăçа кĕртсе пырать. Çав пурлăхăн пĕр пайне Союзлă (Совет) Главнокомандованин аллине панă ĕнтĕ.

Çав вăхăтрах Финляндири нимĕç çарĕсене хĕçпăшалсăрлантарас тĕлĕшпе тăракан чи паха обязательствăсене финсем халĕ те çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пырассĕ. Германин Финлянди территорийĕ çинчи çарĕсене хĕçпăшалсăрлантарас ĕçе Финлянди вăраха ячĕ. Çурçĕрти Финляндире финсем нимĕç çарĕсене хирĕç вăрçă ĕçĕсене октябрĕн 1-мĕшĕнче кăна пуçласа ячĕç, çав ĕçре финсем хăйсен çарĕн пĕчĕк пайĕпе кăна усă курассĕ.

Совет гражданĕсем Румыни пусмăрĕнчен таврăнассĕ

БУХАРЕСТ, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Румынсем Бессарабие, Çурçĕр Буковинăна, Украинăн чылай районĕсене тата Совет Союзĕн ытти территорийĕсене оккупациленĕ вăхăтра нумай пин совет гражданне Румыни каторгине ирĕксĕрлесе хăваласа кайнă. Румынипе перемири çинчен тунă Килĕшĕвĕн 5-мĕш статьи тăрăх, совет гражданĕсене, румын оккупанчĕсем хăваласа кайнăскерсене, тăван çĕршыва каялла тазăрас шутпа, Союзниксен Контроль Комиссийĕ хальхи вăхăтра вĕсене Румынире тĕплĕн çырса тухса шута илет.

Октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне Бухарестпа Крайова хулисенче кăна 8.910 совет гражданне шута илнĕ. 1.027 çынна Совет Союзне ăсатнă та ĕнтĕ тата 600 çынна çывăх кунсенчех ăсатассĕ. Румынирен таврăнакан совет гражданĕсем хушшинче ачасем нумай. Пĕр Бухарест хулинче кăна 450 ытла совет ачине тупнă, вĕсен ашшĕ-амăшĕсене оккупантсем е вĕлерсе пĕтернĕ, е Германие хăваласа кайнă.

Ирĕксĕр хăваласа кайнă совет гражданĕсене шута илес ĕç Румынин ытти хулисемпе провинцийĕсенче те пулса пырать. Çав çынсене васкасах тăван çĕршыва тавăрма хатĕрленессĕ.

Румыни вăрă-хурахĕсем турттарса тухса кайнă предприятисене Совет Союзне каялла таврассĕ

БУХАРЕСТ, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Паянхи кун тĕлне Союзниксен Контроль Комиссийĕ Румынире румын оккупанчĕсем Совет Союзĕнчен турттарса тухса кайнă 120 предприятие ытла тупса палăртнă. Çав предприятисен шутĕнчен апат-çимĕç промышленноçĕн 37 предприятине, хурçă-тимĕр каскалакан 6 завода, йывăç каскалакан 5 фабрикăна, 6 пир-авăр фабрикине, строительство материалĕсен 3 предприятине, 6 типографие, пĕр электростанцине, 11 кинотеатра шыраса тупнă.

Румыни оккупанчĕсем çаратнă совет пурлăхĕсене Румынине турттарас енĕпе хăй вăхăтĕнче «апат-çимĕçпе индустри ресурсĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен генеральнăй секретариат» текен организаци ĕçленĕ. Союзниксен Контроль Комиссийĕ хушнă тăрăх, çав организацие хальхи вăхăтра çĕнĕрен туса йĕркеленĕ те ун çине халиччен Румынине турттарса кайнă совет пурлăхне ССР Союзне каялла тавăрса парас ĕçе хунă.

Совет Союзĕн пурлăхĕсене Румынирен куçарас ĕç октябрĕн малтанхи кунĕсенче пуçланнă, халĕ вăл ăнăçлă хăвăртлăхсемпе пулса пырать. Октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне Румынирен Одессăна çак хулари чылай предприятисен—кĕленче завочĕн, автотехникумăн, типографин оборудованийĕсене илсе килнĕ. Çавăн пекех Одессăна кондитерпа кофе фабрикисен оборудованийĕсене, троллейбус паркне, Одессăран çаратса кайнă музей япалисене чылай каялла ăсатма тытăннă.

РУМЫНИРЕ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ ТЫТА-ТЫТА ХУПАÇÇĔ

БУХАРЕСТ, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Тимпул» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Румынире генеральнăй штаб начальникĕ пулнă корпус генералне Илие Стефляна, Бессараби «губернаторĕ» пулнă дивизи генералне Бойкулескуна тата Буковина «губернаторĕ» пулнă Корнель Калотескуна тытса хупнă.

БУХАРЕСТ, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Семналул» хаçат пропаганда министрĕ пулнă Крайника тата «Порунка времий» хаçатăн редакторĕ пулнă Илие Радулескуна арестлени çинчен пĕлтерет.

КЛУЖ ХУЛИНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ЯТПА БУХАРЕСТРА ДЕМОНСТРАЦИ ТУНĂ

БУХАРЕСТ, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Трансильвани столицине — Клуж хулине ирĕке кăларнă май университет площадĕнче митинг пулса иртнĕ. Çав митинга Пĕрлĕхлĕ рабочи фрончĕ, пĕрлешӳллĕ профсоюзсем, Патриотсен союзĕ тата Çĕрĕç фрончĕ пухнă. Унта профсоюзсен ячĕпе Георг Апостол, социал-демократсен партийĕ ячĕпе Адриан Думитру, коммунистсен партийĕ ячĕпе Андрей Нягу сăмах тухса каланă. Вĕсем Хĕрлĕ Çара, Румыни çарĕпе пĕрле кĕрешсе, Çурçĕр Трансильвани столицине ирĕке кăларнăскере, саламланă тата гитлерла захватчиксене татăклăнах çĕнтермешкĕн çĕршыва демократиллĕ тума кирлине палăртнă. Ăна демократиллĕ тăвас тесен, хальхи правительствăна улăштармалла, мĕншĕн тесен вăл хăй ĕçлеме пултарайманнине тата унăн ырă кăмăл çуккине кăтартса пачĕ, тенĕ.

БОЛГАРИЕ ВĂРÇА ХУТШĂНТАРНĂШĂН АЙĂПЛИСЕНЕ СУДА ПАРАÇÇĔ

СОФИЯ, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). София хулинчи радио пĕлтернĕ тăрăх, Болгарин Юстици министрĕ Нейчев доктор çапла каланă: Болгарие Гитлер Германийĕ майлă пулса союзниксене хирĕç вăрçтарнăшăн айăплă çынсен ĕçĕсене 1944 çул пĕтиччен пурне те пăхса тухмалла. Болгари халăхĕ,—тенĕ Нейчев, — Болгарин кунччен пулнă правителĕсен сутăнчăкла политикине пачах йышăнмасть, мĕншĕн тесен çав правительсем Гитлер ĕçне туса пынă. Халăх вĕсене тивĕçлипе айăплама ыйтать, халăх ыйтнине çĕнĕ правительство пурнăçа кĕртĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Леопольд каналĕнчен çурçĕрелле куçса пырассĕ. Тăшман хирĕç тăрасси пĕртак чакрĕ. Союзниксен çарĕсем 1.000 ярда яхăн малалла кайнă. Тăшманăн вăйлах мар контратакине сирсе янă.

Голландире союзниксен çарĕсем савăлланса кĕнĕ районран хĕвелтухăçнерехре, Венрай патĕнче, малалла кайнă.

Союзниксен çарĕсен чаçĕсем Аахен хулинче майĕпен малалла каяççĕ, унта кашни çуртшăн çапăçма тивет. Аахен хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Бюрселен çывăхĕнче тăшман питĕ хытă хирĕç тăрать. Тăшман Офден районне артиллерирен тата минометсемпе вăйлăн персе тăрать.

Вогез тăвĕсем патĕнче союзниксен çарĕсен чаçĕсем тăшманăн йышлă контратакисене сирсе янă. Ле-Тилло хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Мозелотт шывĕнчен хĕвелтухăçнелле куçса пынă. Çав участокра хăшпĕр тĕлте йывăр çапăçусем пырассĕ.

Союзниксен авиацийĕ çĕр çинчи çарсене пулăшса пынă тата тăшманăн çапăçу районĕнчи вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

ЛОНДОН, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Шельда шывĕ районĕнче нимĕçсен чаçĕсене çавăрса илнĕ, унта союзниксен çарĕсем халь Эйзендейк хули патне çитнĕ. Союзниксен çарĕсем тата Венрай хули хĕррине çитнĕ, унта хаяр çапăçусем пырассĕ. Унтан кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксен чаçĕсем Венрай хулипе Бюрне хули хушшинчи çула татнă.

Истребитель-бомбардировщиксем Голландири тата Хĕвеланăç Германири аслă районсем çинче кĕрешнĕ, чугун çул объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Тăшманăн ытти объекчĕсене те тапăннă.

Союзниксен çарĕсем Аахен хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри района тăшмантан тасатса пырассĕ. Вĕсем çав хулана йĕри-таврах хупăрласа илнĕ, хулара кашни çуртшăнах çапăçассĕ. Аахен хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Зигфрид линийĕн хăшпĕр участокĕсене тăшмантан тасатнă.

Мозель шывĕ улăхĕнче Мезьер-ле-Мецра çапăçусем пырассĕ. 1.300 ытла йывăр бомбардировщик, 800 истребитель хӳтĕлесе пынипе, Кельн хулинчи вăрçă объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: 8-мĕш арми чаçĕсем Гамбеттола хулине тытса илнĕ хыççăн анлă фронтпа Болонья хулине каякан шоссе çулĕнчен çурçĕрелле тата кăнтăралла куçса пынă. 6-мĕш арми чаçĕсем нумай тĕлте Савио шывĕ патнелле çывхарса пырассĕ. Болонья хулинчен кăнтăртарахра хаяр çапăçусем пырассĕ. Тăшман хытă хирĕç тăрать пулин те, 5-мĕш армин Америка чаçĕсем 1.000 ярда яхăн малалла кайнă.

Октябрĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин çăмăл карапĕсем Адриатика тинĕсĕнчи Вир утравĕ патĕнче тăшманăн хураллаcа пыракан темиçе суднине пенĕ. Çавăн хыççăн пуçланса кайнă вăйлă çапăçу 5 сехете пынă. Тăшманăн 11 суднине вара путарнă е сиенленĕ. Октябрĕн 12-мĕшĕнче каçхине Корфу гаванне Англи суднисем пырса кĕнĕ.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, октябрĕн 16-мĕшĕнче Германири, Австрири тата Чехословакири нефть тасатакан заводсем çине, авиаци завочĕсем çине тата сортировка станцийĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Авиацин ытти соединенийĕсем çапăçу районĕнче тата Югослави çинче кĕрешнĕ.

Венгрири лару-тăру

ЧЕРНОВЦЫ, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрири лару-тăру çинчен малтанхи пекех тĕрĕссине калама йывăр. Будапештри радио çаплах нимĕçсен тата Ференц Салаши пуç пулса тăракан фашистла ушкăнăн аллинче тытăнса тăрать. Ференц Салаши хăйĕн пуканелле «правительствине» туса хунă. Вăл «правительство» пĕтĕмĕшпех Берлин приказĕсене пăхăнса тăрать. Çав вăхăтрах Хорти майлисен правительстви те ĕçлет пулмалла.

Нимĕçсен пропаганди Салаши «правительствин» лару-тăрăвĕ Венгрие çак вăрçăра гитлерла Германи енче тытса тăма çителĕклех çирĕп пек туса кăтартма хăтланать. Анчах та Салаши хăй тата унăн министрĕсем туха-туха каланинчен уççăнах çакă курăнса тăрать: çĕнĕ правительствăн çарта е халăх хушшинче нимĕнле тĕрек те çук, çавăн пекех Венгрире Германие хирĕçле шухăш-кăмăлсем тата вăрçăран тухас шухăш-кăмăлсем анлăн сарăлнă. Салаши «правительствине» халăх вăйлăн хирĕç тăрать.

Хорти регента Венгри çарĕнчи нумай генералсем парăнса тăрассĕ. Ку вăл çакăнтан та лайăх курăнать: Ференц Салаши тунă малтанхи утăмсенчен пĕри вăл — Венгрин 1-мĕш армийĕн командующине Бела Миклош генерал-полковника вырăнтан кăларса, ун вырăнне Ласло генерал-лейтенанта лартни пулса тăрать. Венгрин 2-мĕш армийĕн командующине Береш генерал-полковника та çавăн пекех вырăнтан кăларнă. Ун вырăнне Майор генерал-лейтенанта лартнă.

Хортин вăрçăран тухас тĕлĕшпе тытакан программи çарта вăйлăн саралать пулас. Салаши ку тĕлĕшпе уйрăм приказ кăларнă. Çав приказпа вăл салтаксемпе офицерсене Хорти регента панă присягăран «хăтарать» те çарти çынсене Салаши «правительствине» присяга пама чĕнет.

Салаши «правительствин» министрĕсем кăларакан приказсемпе чĕнсе каланисем венгер халăхне тата Венгри çарне Германипе союзлă пулса тăма пăрахмалла мар тесе кăшкăрашса чĕннипе тулса ларнă. Çавăн пекех тата çав приказсенче «хăравçăсемпе йăвашчунлисене» хаяррăн тыткаласси пе хăратассĕ. Оборонăн «çĕнĕ министрĕ» Кароль Берецки генерал хăйĕн приказĕнче çынсене хăратса çапла каланă: Германи майлă пулса кĕрешĕве хутшăнма килĕшмен венгерсене пурне те, «нациллĕ туйăма çухатнă çынсем» вырăнне хурса, «наци речĕсенчен кăларса ывăтмалла» пулать, урăхла каласан, вĕлерсе пĕтермелле пулать, тенĕ. Венгрин тепĕр «министрĕ» Райниш халăха чĕнсе каланинче çапла хăратнă: «пирĕн правительство, хăйĕн аллинчи пур пек майсемпе усă курса, çирĕп йĕрке тытса тăма пултарать, Германи майлă пулса кĕрешме кăмăллакансене кам та пулин кĕтесрен тапăнма пăхать пулсан, çавсене чарса лартма вăй тупать», тенĕ вăл.

Хорти регент халĕ ăçта пурăнни пирки çаплах нимĕнле хыпар та çук.

ЧЕРНОВЦЫ, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Будапештри радио кĕçĕр питех те çĕрле Салаши «правительствин» членĕ — Габор Вайна чĕнсе каланине панă. Çав чĕнӳрен çакă курăнса тăрать: Салаши «правительствин» чăн-чăн влаçĕ питех те тĕрексĕр, çав «правительствăна» Венгри халăхĕ вăйлăн хирĕç тăрать. Габар Вайна «кашни венгерецăа хăйĕн вырăнĕнче çирĕп тăма» хушать, «кам пĕтĕм вăя хурса ĕçлемест, çавна саботажник тесе шутламалла пулать», тесе хăратать вăл. «Саботажниксене чи çирĕп наказани памалла пулать», тесе хушать малалла Габор Вайна.

Çапла ĕнтĕ Габор Вайна чĕнсе калани Салашин фашистла ушкăнне хирĕç пуçласа янă забастовка малалла пынине кăтартса парать.

Габор Вайна хăй чĕнсе каланинче Салаши приказĕсене пăхăнман венгерецсем тĕлĕшпе хаяр мерăсем йышăнассипе хăратать.

ЧЕРНОВЦЫ, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Салаши влаçĕсем Будапештри радио тăрăх паракан чĕнсе каланисемпе приказсем Будапештри лару-тăру çаплипех питĕ çивĕч пулнине тата Салаши ушкăнне хирĕç хытă тăнине кăтартса парассĕ. Будапештри полици начальникĕ радио тăрăх çĕнĕ приказ панă. Çав приказра вăл халăха урамсенче кăна мар, çавăн пекех хваттерсенче те виççĕ çынтан ытларах ушкăнсемпе пухăнма татăклăнах чарнине татах та тепĕр хут çирĕплетсе каланă. Тĕттĕм пулсан урамсенче полици органĕсен представителĕсем, нимĕçсемпе венгерсен çар служащийĕсем тата, ĕçпе кирлĕ чухне, коммуналлă предприятисен рабочийĕсемпе служащийĕсем кăна пулма пултарассĕ, тенĕ приказра. Будапешта пыракан çынсем чугун çулпа е пароходпа тĕрĕссинех çав кун килнине хăйсен çул билечĕсемпе çирĕплетсе пама тивĕçлĕ, Будапешта çитсен вара вĕсен çийĕнчех хăйсен килĕсене каймалла. Урамсенче уйрăм паллăсемпе палăртнă çар автомобилĕсен тата нимĕç номерĕсене лартнă автомобильсен кăна çӳреме юрать. Полици начальникĕ çак приказа пăсакансене çийĕнчех арестлесси çинчен асăрхаттарнă.

Венгрин генеральнăй штаб начальникĕ те приказ кăларнă. Çав приказра вăл Венгри нумай салтакĕсемпе офицерĕсем «хăйсен тивĕçне пăсса», çар чаçĕсенчен хăйсен ирĕкĕпе пăрахса кайнине палăртать. Генеральнăй штаб начальникĕ çав çынсене халех çывăхри çар чаçĕсене таврăнма хушнă, çакна октябрĕн 20-мĕшĕнчи кăнтăрлаччен пурнăçа кĕртекенсене наказани парассинчен хăтарма пулнă. Кăтартнă срокра таврăнман салтаксемпе офицерсене хирти суд аллине парса асаплантарса вĕлермелле пулать, тенĕ приказра. Будапешт гарнизонĕн коменданчĕ те радио тăрăх çавăн пек приказах панă.

Салаши «правительствин» ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Райниш хăй радио тăрăх тухса каланă сăмахĕнче еврей çыннисене питĕ хаяррăн юнанă, çапла вара вăл Салаши «правительстви» Берлин кăтартăвĕсем тăрăх ĕçленине татах та тепĕр хут çирĕплетсе панă. Вăл çапла асăрхаттарнă: еврейсене хирĕç çĕнĕ распоряженисем кăларма хатĕрленессĕ, çав распоряженисене пăсакансене «Чрезвычайнăй вăхăтри законсем тăрăх» айăплассĕ, тенĕ; урăхла каласан, çав законсене пăсакансене вĕлерессĕ. Салаши «правительстви» еврейсене хирĕç çынçиенле çĕнĕ декретсем хатĕрленине, Венгрире пурăнакан еврей çыннисене массăллăн вĕлерсе пĕтерме хатĕрленнине Будапешт полицийĕн начальникĕ кăларнă распоряжени те çирĕплетсе парать. Çав распоряженире еврейсене хăйсем пурăнакан çуртсенчен пăчах та тухма чарнă. Еврейсем пурăнакан çуртсен алăкĕсем кăнтăрла та, çĕрле те питĕрĕнсе тăмалла. Приказра юлашкинчен çапла каланă: еврей мар çынсен еврейсем патне çӳреме юрамасть, тенĕ.

РОММЕЛЬ ВИЛНИ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлер агентстви — Германин информаци бюровĕ Роммель вилни çинчен пĕлтернĕ. Агентство кăтартса панă тăрăх, Роммель малтан аманнă пирки вилнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.